25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
ФЕВРАЛЬ
6
ШАМАТКУН
29(6266) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

ПИРӖН ВОЙСКӐСЕМ СТАРЫЙ ОСКОЛ, ИЗЮМ ХУЛИСЕНЕ ТЫТСА ИЛНӖ

1. Февралӗн 5-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем, вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн, СТАРЫЙ ОСКОЛ хулипе чугунҫул станцине тытса илнӗ. Противникӑн хупӑрласа илнӗ гарнизонне пӗтерсе тӑкнӑ, унӑн пӗр пайне тыткӑна илнӗ.

2. Украинӑра пирӗн войскӑсем ИЗЮМ хулипе чугунҫул станцине тытса илнӗ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Фронтовиксен ҫемьисемпе вӑрҫӑ инваличӗсемшӗн тӑванла тӑрӑшар!

Хӗрлӗ Ҫар боецӗсемпе командирӗсен ҫемьисемшӗн тата вӑрҫӑ инваличӗсемшӗн пирӗн пӗтӗм халӑх, пӗтӗм тӑван ҫӗршыв тӑрӑшать.

СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче рядовой тата кӗҫӗн начальство составӗнчи военно-служащисен ҫемьисене пособисем памалли тата тӳлемелли йӗрке ҫинчен постановлени йышӑнчӗ. Ҫак постановление тӳррӗн пурнӑҫласа пырса, Улатӑр хулинче, Сӗнтӗрвӑрри, Етӗрне, Кувакино, Калинино, Хӗрлӗ Чутай, Канаш тата ытти хӑшпӗр районсенче фронтовиксен ҫемьисене пулӑшас тӗлӗшпе унти партипе совет органӗсем пысӑк ӗҫсем туса ирттерчӗҫ. Унта пособи е пенси памалла тӑвас ыйтусене СССР Верховный Совет Президиумӗн Указӗнче кӑтартнӑ сроксенче татса пама тӑрӑшаҫҫӗ. Пенси тата пособи укҫисене вӑхӑтра парса тӑраҫҫӗ. Фронтовиксен ҫемьисене вӑхӑтлӑх пособисем е тумтир парса, вутӑ турттарса парса пулӑшаҫҫӗ. Улатӑр хулинче 1942 ҫулта фронтовиксен ҫемьисемпе вӑрҫӑ инваличӗсене вӑхӑтлӑх пособи шучӗпе 18.000 тенкӗ укҫа, 24 мӑшӑр ҫӑматӑ, 18 ваткӑллӑ пинжак, 15 фуфайкӑ, 26 мулаххай, 127 мӑшӑр носки, 150 кубометра яхӑн вутӑ парса пулӑшнӑ. Вӑрҫӑ инваличӗсене — 63 ҫынна—ӗҫе вырнаҫтарнӑ. Ку тӗлӗшпе хулари социальнӑй обеспечени отделӗн заведующийӗ Редькина юлташ тӑрӑшса ӗҫленине, вӑл хӑйӗн ӗҫне юратса тунине палӑртмалла. Етӗрне районӗнче (социальнӑй обеспечени отделӗн заведующийӗ Юхтанов юлташ) военно-служащисен ҫемьисемпе вӑрҫӑ инваличӗсене колхозсенчи пулӑшу кассисенчен вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа 647 центнер тырӑ, кашни хуҫалӑха 3—5-шер кубометр вутӑ парса пулӑшнӑ. Фронтовиксен 97 ачине ялан ӗҫлекен ача сурчӗсене, ача сачӗсемпе яслийӗсене, уборка вӑхӑтӗнче—2.052 ачана вӑхӑтлӑх ӗҫлекен яслӗсене вырнаҫтарнӑ.

Хӑйӗн ҫемьисемшӗн тӑванла тӑрӑшнине фронтовиксем нихӑҫан та манмаҫҫӗ. Вӗсем ҫак ырӑ хыпара пӗлсен, ирсӗр тӑшмана хирӗҫ татах та паттӑртарах ҫапӑҫӗҫ, тӑван ҫӗршывшӑн, Сталиншӑн, тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе чыслӑхӗшӗн хӑюллӑн ҫапӑҫӑва кӗрӗҫ, захватчиксене хирӗҫ хӑйсен юлашки юн тумламӗ юлмиччен ҫапӑҫӗҫ.

Анчах фронтовиксен ҫемьисене тата вӑрҫӑ инваличӗсене пулӑшас ӗҫ пур ҫӗрте те тивӗҫлипе пулса пырать теме ҫук-ха. Ҫӗмӗрле, Первомайски, Елчӗк тата ытти хӑшпӗр районсенче военно-служащисен ҫемьисемпе вӑрҫӑ инваличӗсене пособисем тата пенсисем памалли закона пӑсаҫҫӗ. Унта пособи е пенси укҫисене вӑхӑтра парса тӑмаҫҫӗ, льготӑсем памалли закона тивӗҫлипе пурнӑҫа кӗртсе пымаҫҫӗ. Ҫак ҫитменлӗхсене урӑх нимӗнпе те мар, унти партипе совет органӗсенче ӗҫлекенсем фронтовиксен ҫемьисемпе вӑрҫӑ инваличӗсен пурнӑҫпа йӑла условийӗсене лайӑхлатассишӗн тӑрӑшманнипе ҫес ӑнлантарса пама пулать.

Ҫӗмӗрле районӗнче СССР Верховный Совет Президиумӗн 1941 ҫулти июнӗн 26-мӗшӗнче „Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче рядовой тата кӗҫӗн начальство составӗнчи военно-служащисен ҫемьисене пособисем памалли тата тӳлемелли йӗрке ҫинчен“ йышӑннӑ постановленине пӑснӑ. Закон тӑрӑх пособи памалла тӑвас ыйтусене висӗ талӑкран кая хӑвармасӑр пӑхса тухмалла пулсан, унта хӑшпӗр ҫемьесем виҫшер уйӑх хушши пособи илмесӗр пурӑннӑ. Акӑ, Петров красноармеецӑн ҫемьи—1942 ҫулти апрель уйӑхӗнчен вара, А. С. Муциковӑн ҫемьи—1942 ҫулти февраль уйӑхӗнчепе, И. П. Макаркинӑн ҫемьи — 1941 ҫулти декабрь уйӑхӗнчен вара тивӗҫлӗ пособие илеймен. Контрольҫителӗксӗр пулнӑ пирки, унта государство укҫи-тенкине вырӑнсӑр салатнӑ фактсем те пулнӑ. Хӑшпӗр ҫемьесем райвоенкоматран—аттестат тӑрӑх, райсобесран—пособи шучӗпе укҫа илсе тӑнӑ. Районри социальнӑй обеспечени отделӗнче учет ӗҫӗ ҫавтери япӑхса кайнӑ, ҫавна пула хӑшпӗр ҫынсем (К. И. Сибатова, М. Самарина) пӗр уйӑхра икшер хутчен пособи илнӗ, хӑшпӗрисем вара ҫав вӑхӑтрах пособи пачах та илмен. Районри социальнӑй обеспечени отделӗн заведующийӗ Умов юлташ ҫак ҫитменлӗхсене ҫийӗнчех пӗтерес, вӑрҫӑ инваличӗсене ӗҫе вырнаҫтарас, вӗсене ҫӗнӗ специальность илме пулӑшас тӗлӗшпе пачах ҫителӗксӗр ӗҫленӗ. Фронтовиксен ҫемьисемпе вӑрҫӑ инваличӗсене пулӑшас ыйту ҫине ҫакнашкал чунсӑрла, бюрократла пӑхнине ниепле те тӳссе тӑма ҫук. Ҫавӑнпа та ЧАССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ, ку ыйтупа Ҫӗмӗрле районӗнчи социальнӑй обеспечени отдел заведующийӗн Умов юлташӑн докладне итлесе, Умов юлташа тата Ҫӗмӗрле райсовет исполкомӗн председательне Носков юлташа асӑннӑ ҫитменлӗхсене хӑвӑрт пӗтерме хушрӗ.

Ӑҫта партипе совет органӗсем фронтовиксен ҫемьисемпе вӑрҫӑ инваличӗсене пулӑшас ыйтӑва тивӗҫлипе хакламаҫҫӗ, СССР Верховный Совет Президиумӗ военно-служащисен ҫемьисене пособи памалли тата тӳлемелли ҫинчен йышӑннӑ постановленине пурнӑҫа кӗртнине тӗрӗслесе тӑмаҫҫӗ, унти социальнӑй обеспечени отделӗсем чӑтма ҫук начар ӗҫлеҫҫӗ.

Хӑшпӗр ҫӗрте фронтовиксен ҫемьисемпе вӑрҫӑ инваличӗсен ыйтӑвӗсем ҫине чунсӑрла пӑхаҫҫӗ. Вӗсен заявленийӗсене нумай вӑхӑт хушши пӑхса тухмасӑр „ӗҫлӗ хутсем“ хушшинче тытса усраҫҫӗ. Нумай вӑхӑт хушши иртсен тин вӗсем ҫине резолюци хураҫҫӗ те тепӗр организацине ӑсатаҫҫӗ, унта вара ҫав заявлени каллех нумай вӑхӑт хушши выртать. Закон тӑрӑх, вӑрҫӑ инваличӗсене вӗсем халиччен ӗҫленӗ вырӑнсенех ӗҫлеме илмелле. Ҫакна Элӗк районӗнчи Чӑваш Сурӑм сельповӗн председателӗ те лайӑх пӗлет. Апла пулин те, вӑл ҫара кайиччен сельпора продавец пулса ӗҫленӗ Ильин юлташа ӗҫе илмесӗр тӑрать. Ильин юлташ ҫак ыйтӑва татма райсобес заведующийӗ, райсовет исполком председателӗ патне тата районри прокуратурӑна ҫитнӗ. Вӗсем унӑн заявленийӗ ҫине резолюцисем хурса пӗтернӗ, анчах сельпо председателӗ Ильин юлташа ҫаплипех ӗҫе илмен.

Фронтовик хӑйӗн ҫемьишӗн тӑрӑшманни, унӑн ҫемьи пурнӑҫпа йӑла условийӗсене лайӑхлатассишӗн тӑрӑшманни ҫинчен пӗлсен паллах, кӳренет. Апла пулсан, вырӑнти работниксем ку ыйту ҫине чунсӑрла пӑхни унӑн ҫапӑҫури вӑйхӑватне чакарма пултарать, Хӗрлӗ Ҫарӑн вӑй-хӑватне чакарать. Ҫакна пӗр минутлӑха та манмалла мар. Фронтовик ҫемьисемпе вӑрҫӑ инваличӗсене пулӑшас ӗҫри ҫитменлӗхсене хӑвӑрт пӗтермелле.

Хӗрлӗ Ҫар кунӗ тӗлне ҫуракине хатӗрленсе ҫитеҫҫӗ

ШАХАСАН. Шуркассинчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем Хӗрлӗ Ҫар 25 ҫул тултарнӑ куна ҫуракине хатӗрленсе ҫитнипе кӗтсе илессишӗн тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Колхоз вӑрлӑхсене хатӗрлесе ҫитернӗ, уя 1.000 лав ытла тислӗк кӑларнӑ. Уйӑхлӑх хушшинче колхозниксем 15 центнер кӗл, 18 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ тата 22 центнер фекали пухса хатӗрлерӗҫ.

Ҫуракинче пурӗ 26 плуг ӗҫлемелле, вӗсене пурне те лайӑх юсаса хунӑ тата лаша хатӗрӗсене те ҫителӗклӗ таран хатӗрлесе хунӑ.

Ҫавӑн пекех, ҫуракине Ямпахри «Майӑн 1-мӗшӗ» колхоз та лайӑх хатӗрленет. Январь уйӑхӗнче кӑна колхозниксем 21 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ, 23 центнер кӗл пухса хатӗрленӗ, уя 1.200 лав ытла тислӗк кӑларнӑ, 50 гектар ҫинче юр тытса хӑварнӑ. Ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе «Активист», «Красный партизан» колхозсем те аван ӗҫлеҫҫӗ.

В. Яковлев.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Февралӗн 4-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Украинӑра пирӗн войскӑсем татӑклӑн атакӑласа **Купянск** хулине тата **Двуречная, Боровая** ятлӑ район центрӗсене тытса илнӗ.

Курскран хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн войскӑсем **Щигры** хулипе чугунҫул станцине, **Тим** хулине, **Черемисиново** ятлӑ район центрӗпе чугунҫул станцине тата **Колпны** ятлӑ район центрӗпе чугунҫул станцине тытса илнӗ.

Дон ҫинчи Ростовран кӑнтӑртарахра пирӗн войскӑсем **Старо-Минская** ятлӑ район центрӗпе пысӑк чугунҫул узелне тата **Каневская** ятлӑ район центрӗпе чугунҫул станцине тытса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче пирӗн войскӑсем малтанхи еннеллех ҫапӑҫса пынӑ.

* * *

Февралӗн 3-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 100 автомашинине ҫити пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, артиллерин 4 батарейине пусарса лартнӑ, тӑшманӑн пехотине пӗр батальона ҫити сапаласа янӑ, пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Дон ҫинчи Ростовран кӑнтӑртарахра пирӗн войскӑсем ӑнӑҫлӑн наступлени туса пынӑ. Мечетинская станцинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехри пӗр рубежра тӑшман оборонӑн вӑйлӑ тӗреклетнӗ линийӗ туса хунӑ. Нимӗҫсем йышлӑ дзотсем, окопсем туса хунӑ, йӗплӗ пралук карса тухнӑ тата ҫав пункт патне пымалли вырӑнсене минӑсем нумай хурса тухнӑ. Совет чаҫӗсем артиллери, танксем, пехота тата кавалери вӑйлӑн пырса ҫапнипе тӑшман оборонине татнӑ та вӑл тӑракан вырӑна кӗрсе кайнӑ. Халӑх пурӑнакан вӑйлӑ тӗреклетнӗ темиҫе пункта тытса илнӗ. Нимӗҫсем каяллла чакнӑ, ҫапӑҫу хирӗнче вӗсен салтакӗсемпе офицерӗсен темиҫе ҫӗр вилли тата персе ҫӗмӗрнӗ техники йышлӑн выртса юлнӑ. Пирӗн чаҫсем трофейӑсем тытса илнӗ тата тыткӑна илнӗ

* * *

Красный Лиман районӗнче Н-ски гвардейски соединени тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе халӑх пурӑнакан темиҫе пункта тытса илнӗ. Ҫав пунктсенчен пӗрин патӗнче кӑна нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсен 300 ҫити виллине шутласа кӑларнӑ. 2 танк, 6 оруди, 19 пулемет, боеприпассен 2 складне тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. Тепӗр участокра тӑшманӑн танкӗсемпе пехотин контратакине сирсе янӑ, Гитлеровецсене пӗр ротӑна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ тата нимӗҫсен 9 танкне персе ҫӗмӗрнӗ.

* * *

Купянск районӗнче тӑшман юханшыв хӗрринче оборонӑн вӑйлӑ тӗреклетнӗ рубежӗ туса хунӑ. Пирӗн чаҫсем кӑнтӑртан тата ҫурҫӗрӗнчен пырса хула хӗррисене кӗрсе кайнӑ. Урамри хаяр ҫапӑҫусенче пирӗн боецсем тӑшманӑн 1.400 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. 15 танк, 34 оруди, 130 пулемет, 43 миномет, 1.900 винтовка, 12 транспорт, ҫӑнӑх хунӑ икӗ склада тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ.

* * *

Воронежран хӗвеланӑҫнерехре пирӗн войскӑсем ӑнӑҫлӑн наступлени туса пынӑ. Н-ски соединенин чаҫӗсем нимӗҫ пехотине пӗр полк таран пӗтерсе тӑкнӑ. 16 оруди, 18 пулемет, 17 радиостанци, 6 пин снаряд, 4 пин ручной граната тата ытти тӗрлӗ ҫар пурлӑхӗсем нумай тытса илнӗ. Голосов юлташӑн наступлени туса пыракан чаҫне хирӗҫ нимӗҫсем 15 танка атакӑна кӗртсе янӑ. Пирӗн подразделенисем тӑшманӑн 7 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ. Малалла куҫса халӑх пурӑнакан пысӑк пункта тытса илнӗ. Пӑшалсемпе тата пулеметсемпе персе нимӗҫсен 5 самолетне ӳкернӗ.

* * *

Аяларахра Воронеж облаҫӗнчи Юдино ялӗнче нимӗҫсемпе венгерец ирсӗрӗсем ялти ҫынсене пусмӑрлани тата мӑшкӑллани ҫинчен ҫырнӑ акта пичетлетпӗр: «Нимӗҫсемпе вӗсен венгерец хӳрешкисем пирӗн ялти мӗнпур халӑха ҫаратса юхӑнтарчӗҫ. Ҫаратуҫӑсем хресченсенчен апат-ҫимӗҫсене тата хаклӑ япаласене туртса илчӗҫ, пур ҫынсене те хӑйсен ҫурчӗсенчен урама хӑваласа кӑларчӗҫ. Нумай ҫуртран витесем туса хучӗҫ. Лашасене ҫуртсене кӗртсе тӑратрӗҫ, колхозниксем хӑйсен ҫемьисемпе, ҫамрӑк ачисемпе пӗрле уҫӑ ҫӗртех е землянкӑсенче пурӑнчӗҫ. Фашистла захватчиксем совет ҫыннисен тивӗҫӗнчен тӑрӑхлатчӗҫ, мӑшкӑллатчӗҫ. Комендант пур ҫынсене те номерсем валеҫсе пачӗ, кашни ҫынна ҫанӑ ҫине номер ҫыхса ҫӳреме хушрӗ. Урамра ҫав номерсӗр тухсассӑн оккупантсем ҫынсене хытӑ хӗнетчӗҫ тата штраф тӳлеттеретчӗҫ. Гитлеровецсем пур ҫынсене те укрепленисем тума ялтан 10 километр аякка хӑваласа каятчӗҫ те вӗсене унта иртен пуҫласа тӗттӗм пуличченех ӗҫлеттеретчӗҫ. Ӗҫе кая юлса тухнӑшӑн нимӗҫсем хулӑпа ҫаптаратчӗҫ. Хӗрлӗ Ҫар пырса ҫапнипе каялла чакнӑ чухне бандитсем колхозниксен 70 ҫуртне ҫунтарса ячӗҫ. Арҫынсемпе хӗрарӑмсене нумайӗшне Германие фашистла каторгӑна ирӗксӗр хӑваласа кайрӗҫ». Акта майор Кичанов, старши лейтенант Сироткин, Юдино ялӗнчи ҫынсем — Красноштанова, Тимченко тата ыттисем те алӑ пуснӑ.

* * *

Француз патриочӗсем, ирӗклӗ стрелоксен отрячӗсене пӗрлешнӗскерсем, нимӗҫ оккупанчӗсене хирӗҫ вӑйлӑн кӗрешеҫҫӗ. Парижри пӗр площадре ирӗклӗ стрелоксен ушкӑнӗ нимӗҫ отрячӗ ҫине темиҫе граната ывӑтнӑ. Нумай гитлеровеца вӗлернӗ тата амантнӑ. Кот д Орта ирӗклӗ стрелоксем нимӗҫсен 5 гарнизонне пӗтерсе тӑкнӑ тата автоматсемпе патронсен складне тытса илнӗ. Сен-Жермен де Фоссе районӗнче нимӗҫсен товарнӑй поездне ӳпӗнтерсе янӑ.

Февралӗн 5-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Февралӗн 5-мӗшӗ, ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем малтанхи еннеллех наступленилле ҫапӑҫусем туса пынӑ.

* * *

Дон ҫинчи Ростовран кӑнтӑртарахра пирӗн войскӑсем, противник хирӗҫ тӑнине сирсе ярса, малалла куҫнӑ. Н-ски часть 2 сехет хушши пынӑ ҫапӑҫура нимӗҫ пехотин батальонне аркатса тӑкнӑ, тӑшманӑн 3 танкне ҫӗмӗрнӗ. Тепӗр участокра пирӗн ҫӑмӑллӑн куҫакан отрядсем халӑх пурӑнакан пысӑк пункта йышӑнса илнӗ. 2 бронемашина, 4 оруди (вӗсенчен иккӗшӗ—йывӑр орудисем), продовольстви складне тата япаласен складне тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Красный Лиман районӗнче пирӗн войскӑсем малалла тапӑнса пынӑ. Н-ски чаҫӑн боецӗсем, гитлеровецсем хирӗҫ тӑнине сирсе ярса, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта тытса илнӗ. Тепӗр участокра нимӗҫсем хӑйсен резервӗсене илсе пынӑ та ҫапӑҫӑва танксен йышлӑ вӑйӗсене тата пехотӑн 2 полкне ҫити кӗртсе янӑ. Пирӗн чаҫсем авиаци пулӑшса пынипе тӑшмана вӑйлӑн пырса ҫапнӑ, ӑна каялла чакарнӑ, хӑйсем малалла куҫнӑ. 18 танк тата нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсене 500 ҫынна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Совет летчикӗсем сывлӑшри ҫапӑҫусенче тӑшманӑн 8 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Купянск районӗнче Н-ски часть пӗр меллӗ рубежшӑн пынӑ ҫапӑҫура нимӗҫ пехотине 2 ротӑна ҫити вӗлерсе пӗтернӗ, 3 танк тата артиллери батарейине пӗтерсе тӑкнӑ. Тыткӑна илнӗ, трофейӑсем тытса илнӗ.

* * *

Курскран хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн войскӑсем ӑнӑҫлӑн малалла тапӑнса пынӑ. Н-ски соединенин чаҫӗсем 2 кун хушшинче тӑшманӑн 1.485 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ. Ҫакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: орудисем — 54, минометсем — 52, пулеметсем — 75, радиостанцисем — 6, тӗрлӗ складсем — 28 тата тӗрлӗ ҫар материалӗсем нумай тытса илнӗ. Ытти участоксенче пирӗн чаҫсем, тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ.

* * *

Кавказ лешьенчи фронтра пирӗн войскӑсем наступленилле ҫапӑҫусем туса пынӑ. Пӗр участокра совет танкисчӗсем тӑшман оборонине шала кӗрсе кайнӑ та нимӗҫ пехотине пӗр батальона ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Н-ски соединенин чаҫӗсем юлашки ҫапӑҫусенче нимӗҫсенчен 19 танк, 68 оруди (вӗсенчен 48-шӗ —пысӑк калибрлисем), 30 тягач, 149 автомашина, 446 велосипед, боеприпассен складне тата продовольствин 2 складне тытса илнӗ.

* * *

Орел облаҫӗнче кӗрешекен партизансен отрячӗ нимӗҫсен артиллерипе автомашинӑсем турттарса пыракан поездне ӳпӗнтерсе янӑ. Пӗр паровоз, 2 вагон, 8 платформа ҫӗмӗрӗлнӗ. Крушение пула 20 нимӗҫ салтакӗ вилнӗ. Тепӗр отрядри партизансем январь уйӑхӗн вӗҫӗнче халӑх пурӑнакан пӗр пунктри нимӗҫ гарнизонне сасартӑк тапӑннӑ. Пуҫланса кайнӑ ҫапӑҫура совет патриочӗсем 40 гитлеровеца вӗлернӗ, 2 пулемет, 15 винтовка тата 10.000 патрон тытса илнӗ.

* * *

Германире тата вӑл оккупациленӗ ҫӗршывсенче ҫар тӗрмисемпе салтаксем валли тунӑ концентрациллӗ лагерьсенче хальхи вӑхӑтра темиҫе пин нимӗҫ салтакӗ пурӑнать. Эльба ҫинчи Торгау тӗрминче 3.000 ҫын ытла пурӑнать. Грауденцри тӗрмене кашни уйӑхрах ҫар сучӗ айӑпласа янӑ пин салтака яхӑн пырать. Ҫав салтаксем вӗсем пуринчен ытла Совет Союзӗпе Германи хушшинчи фронтри войско чаҫӗсенчен. Вӗсенчен ытларах пайне «армие йӗркерен кӑларнӑшӑн», «противникӑн хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене мухтанӑшӑн», «ҫапӑҫу хирӗнче хӑраса ӳксе пӑшалӗсене ҫухатнӑшӑн», «хӑйсене хӑйсем суранланӑшӑн» тата ыттишӗн те айӑпласа тӗрмене хупмалла тунӑ.

Самолетсемпе танксем тата бронепоездсем тума

ЙЕПРЕҪ, февралӗн 5-мӗшӗ. Боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлӑ эскадрильине тума 6.000.000 тенкӗ укҫа пухнӑшӑн юратнӑ ҫулпуҫӑмӑр Сталин юлташ пирӗн республикӑри комсомолецсемпе ҫамрӑксене хӗрӳллӗн саламларӗ тата Хӗрлӗ Ҫар ячӗпе тав турӗ. Ҫулпуҫӑн саламӗпе хавхаланса, районри комсомолецсемпе ҫамрӑксем самолетсен эскадрильине тума укҫа пухас ӗҫе вӑйлатрӗҫ. Январӗн 22-мӗшӗпе февралӗн 4-мӗшӗ хушшинче ҫак ӗҫ валли татах 66.338 тенкӗ пухрӗҫ. Ҫапла вара боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума пӗтӗмпе 140.388 тенкӗ пухса банка хыврӗҫ.

Ку ӗҫе колхоз ҫамрӑкӗсем ҫеҫ мар, предприятисемпе учрежденисенчи тата шкулсенчи ҫамрӑксем те активлӑн хутшӑнчӗҫ. Буинскри вӑтам шкулти ҫамрӑксем (ВЛКСМ пуҫламӗш организацин секретарӗ Елкина юлташ) — 3.060 тенкӗ, Буинск поселокӗн советӗнчи ҫамрӑксем (ВЛКСМ пуҫламӗш организацин секретарӗ Моргунов) — 1.160 тенкӗ, вӑрман заводӗнчи ҫамрӑксем —3.000 тенкӗ, райвоенкоматри комсомолецсемпе ҫамрӑксем — 2.930 тенкӗ пухрӗҫ.

Д. Михайлов.

* * *

КАНАШ, февралӗн 5-мӗшӗ. (Телефонпа). Хулари железнодорожниксем, Сталин юлташ республикӑри колхозниксемпе трактористсене танксен колоннисене тума укҫа пухнӑшӑн саламланипе хавхаланса, хӑйсен вӑйӗпе бронепоездсем тума шутларӗҫ. Февралӗн 3-мӗшӗ тӗлне государство банкӗн хулари отделенине ҫак ӗҫ валли 495.858 тенкӗ хывнӑ.

Вагонсем юсакан заводри рабочисемпе инженерла-техникла работниксем — 316.753 тенкӗ, Канаш узелӗнчи железнодорожниксем — 126.857 тенкӗ пухнӑ.

Бронепоездсем тума укҫа пухас ӗҫе промартельсен коллективӗсем те хутшӑнаҫҫӗ. Инвалидсен «Красный воин» артелӗнче ӗҫлекенсем бронепоезд тума хӑйсен пӗр уйӑхри ӗҫукҫине пама пулнӑ. Ҫакӑ вӑл 21.000 тенкӗ пулать. Ҫавӑн пекех «1-ое Мая» артель членӗсем те бронепоездсем тума 17.000 тенкӗ хывнӑ. Туранова, Крупнин юлташсем 2 уйӑхри ӗҫ укҫине пачӗҫ.

Г. Михайлов.

Нимӗҫсем Атӑл патне тухас тата Сталинграда тытса илес тесе ытла та хаяррӑн ҫапӑҫнӑ кунсенче капитан Цыбулин тата старши лейтенант Рубан хӑйсен батальонӗсен пуҫӗнче тӑрса боевой рубежсене противникӑн нумай йышлӑрах вӑйӗсенчен калама ҫук хастарлӑн та ҫирӗп хӳтӗлесе тӑнӑ, противника питӗ пысӑк ҫухатусем тӳстернӗ.

Капитан Цыбулин тата старши лейтенант Рубан — Александр Невский орденӗн пӗрремӗш кавалерӗсем.

Ӳкерчӗк ҫинче: капитан Степан Петрович **Цыбулин**, ӑна Александр Невский орденӗпе наградӑлана.

Широков фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Мухтавлӑ воинсем патне парнесем ытларах ярса парар

СӖНТӖРВАРРИ. Хӗрлӗ Ҫар 25 ҫул тултарнӑ ятпа Юртакассинчи «Искра» колхоз членӗсем фронтри юлташсене 60 килограмм тулӑ ҫӑнӑхӗ, 100 килограмм ҫӗрулми, 8 килограмм сухан, 60 ҫӑмарта, 3 кӗренке ҫу ярса параҫҫӗ. Сталин ячӗпе тӑркан колхоз членӗсем те боецсем патне яма 100 килограмм тулӑ ҫӑнӑхӗ, 80 ҫӑмарта, пӗр пӑт ҫу, 10 килограмм пыл, 120 килограмм ҫӗрулми хатӗрлерӗҫ. «Сӗнтӗрпуҫ» колхоз членӗсем ярса паракан парнесем шутӗнче — 17 килогрмм ҫу, 105 килограмм тулӑ ҫӑнӑхӗ, 90 килограмм ҫӗрулми. Районри ытти колхозсем те ку ӗҫе активлӑн хутшӑнчӗҫ.

Н. Константинов.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамӑр корр.). Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫӗнтерӗвӗсемпе хавхаланса, районри ӗҫҫыннисем Хӗрлӗ Ҫар 25 ҫул тултарнӑ ятпа боецсем патне яма парнесем пухаҫҫӗ. Районӗпе илсен, паянхи куна 537 килограмм какай, 25 килограмм ҫу, 60 килограмм пыл, пӗр тонна тулӑ ҫӑнӑхӗ, 1.200 ҫӑмарта, 300 килограмм кӗрпе тата ытти ҫимӗҫсем те пухнӑ. Кунсӑр пуҫне, пылак япаласем тата эрех илсе яма 14.430 тенкӗ укҫа пухнӑ.

Янмурзино колхоз членӗсем боецсем патне яма 60 килограмм какай, 55 ҫӑмарта, 305 килограмм купӑста панӑ. «12 лет Октября» колхоз членӗсем 50 килограмм какай, 94 ҫӑмарта, 12 алшӑлли, 2 мӑшӑр перчатка, 2 мӑшӑр пир тӑла, 9 сӑмса тутри, 9 енчӗк, 12 йӗп ярса панӑ.

С. Шадкин.

* * *

ШАХАСАН. Шуркассинчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем Хӗрлӗ Ҫар 25 ҫул тултарнӑ ятпа фронтри боецсем патне ҫак кунсенче 9 пӑт йӳҫӗтнӗ купӑста, 15 килограмм пыл, 4 килограмм махорка тата ытти те ярса пачӗҫ.

В. Я.

* * *

ЙЕПРЕҪ, февралӗн 5-мӗшӗ. (Телефонпа). Наступлени тӑвакан фронтсенчи войскӑсене Сталин юлташ панӑ приказа сӳтсе-явнӑ май, районри ӗҫҫыннисем Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли парнесем пухас ӗҫе пуҫарчӗҫ. Ҫулӑмлӑ патриотсем февралӗн 4-мӗшӗ тӗлне ҫак ӗҫ валли шӑратман ҫу 300 килограмм ытла; 20 килограмм шӑратнӑ ҫу, 52 килограмм пыл, 50 килограмм махорка, 300 ҫӑмарта, 30 пӑт ытла тулӑ ҫӑнӑхӗ, 16 пӑт кӗрпе тата уйрӑм посылкӑсем 30, эрехсемпе премӗксем илме 20.500 тенкӗ укҫа пухрӗҫ.

«МОПР» колхоз членӗсем боецсем патне 35 килограмм аш-какай, 4 килограмм ҫу, 35 килограмм кӗрпе, 6 пӑт тулӑ ҫӑнӑхӗ, «Эконом» колхоз членӗсем — 8 килограмм ҫу, 5 килограмм пыл, 5 килограмм табак, 35 ҫӑмарта, 15 килограмм кӗрпе ярса пачӗҫ.

Дм. Михайлов.

Чаплă çĕнтерÿ ячĕпе

ВĂРМАР, февралĕн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла çарĕсен юлашкийĕсене Сталинград районĕнче пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкни Тăван çĕршыври ĕççыннисене хытă савăнтарчĕ. Совет Информаци Бюровĕ Сталинград хулине пĕтĕмĕшпех ирĕке кăларни çинчен пĕлтернине районри ĕççыннисем фронта пулăшассине вăйлатнипе, производствăра çĕнĕ çĕкленÿсем тунипе ответлеççĕ. Хĕрлĕ Çар чаплă çĕнтерÿ тунă ятпа районри предприятисемпе учрежденисенче, колхозсемпе шкулсенче ĕççыннисен савăнăçлă митингĕсемпе пухăвĕсем пулса иртрĕç. Вăл митингсемпе пухусенче предприятисемпе колхозсем хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илчĕç.

Аслă Чакри Карл Маркс ячĕпе тăракан, «Комбинат» тата ытти колхозсен членĕсем Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнине çуракине хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илеççĕ. «Хĕрлĕ Мăрат» колхоз членĕсем хĕле кĕнĕренпе уя 400 лав тислĕк тăкрĕç, 30 центнер кĕл, 40 центнер фекали пухрĕç. Акмалли вăрлăха çителĕклĕ таранах хатĕрленĕ, ăна пĕтĕмĕшпех сортласа кондицие лартнă. Ялхуçалăх машинисене юсас ĕç те унта ăнăçлăн пулса пырать. Хĕрлĕ Çар Сталинград патĕнче тунă чаплă çĕнтерÿ çинчен сÿтсе-явма пухăнса, Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 1943 çулхи обязательствăсене срокчен парса татма йышăннă. Вĕсем кăçалхи обязательствăсем шучĕпе 655 пăт тырă хатĕрлев пунктне леçрĕç, аш-какай, сĕт-çу чылай пачĕç.

Спорт инвентарĕсем тăвакан фабрика коллективĕ çак кунсенче нихăçан пулман çĕкленÿпе ĕçлет. Е. Черновăпа М. Андреева стахановкăсем ĕç нормине 145—150 процент тултараççĕ. В. Ларионова, Федорова, Гаврилова юлташсем кулленех икĕ çыншăн ĕçлеççĕ. Фронтри чаплă çĕнтерÿпе хавхаланса, фабрика коллективĕ «Лесоруб Чувашии» ятлă танксем тума 22.000 тенкĕ ытла укçа пухрĕ.

Осипенко ячĕпе тăракан артель коллективĕ Промкоопераци ячĕпе самолетсен звенине тума 6.000 тенкĕ ытла пухса хыврĕ. Т. Михайлова, Жуковская, Кузьмина юлташсем çак ĕç валли икшер кунхи ĕç укçине пачĕç.

Энĕшпуç лесопунктне чугунçул валли вутă хатĕрлеме пынă колхозниксем Павлов, Александров т. ыт. юлташсем ĕç нормине тăтăшах ирттерсе тултараççĕ.

«Коминтерн» колхозăн колхозникĕ 72 çулхи Василий Иванович Тибаков, Хĕрлĕ Çар Сталинград патĕнче тунă çĕнтерÿпе хавхаланса, çапла каларĕ:

— Эпĕ хамăн тăватă ывăлăма нимĕç çăханĕсене пĕтерме фронта ăсатрăм. Паттăр та чее пулăр, тăван çĕршыв, ял-йыш, аçу-аннÿ ятне ан ярăр, çĕнтерсе таврăнăр, — çапла хушса ятăм эпĕ вĕсене. Манăн наказа вĕсем чыслăн пурнăçлама пулчĕç. Паян эпир Хĕрлĕ Çар Сталинград патĕнче чаплă çĕнтерÿ туни çинчен пĕлтĕмĕр. Çак çĕнтерÿшĕн эпĕ пĕтĕм халăхпа, фронтри ывăлăмсемпе пĕрле тем пекех савăнатăп. Фронта пулăшас тесе, колхозра тÿрĕ кăмăлпа ĕçлесе илнĕ тупăшран 500 тенкĕ укçа тата 5 пăт тырă Хĕрлĕ Çара пулăшма паратăп.

Тибаков юлташăн пуçарăвне ытти колхозниксем те хапăл туса йышăнчĕç. Пуху хыççăнах танксен колоннисене тума 30.000 тенкĕ укça, Хĕрлĕ Çар фондне хывма 330 пăт тырă пухăнчĕ.

Н. Григорьев,
ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующийĕ.

Трактористсем колхозсене авăн çапма пулăшаççĕ

ЕЛЧĔК, февралĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Авăн çапас ĕçе пур колхозсенче те халех вĕçлемелле. Çак ĕçе тата кая хăварни çĕршыв умĕнче айăпа кĕни пулать. Юлнă тырпула халех çапса пуçтармалла, государствăна тырă парса татмалла. Çак ответлă ĕçе районри нумай колхозсем ăнăçлăн тата тахçанах пурнăçланă. Анчах хăшпĕр колхозсем, вĕсен руководителĕсем ответлăха туйса ĕçлеменнине пула, авăн çапса пуçтарас ĕçе халĕ те вĕçлемен.

Авăн çапас ĕçре халь МТС-ăн 9 тракторĕ ĕçлет. Ытти тракторсене МТС коллективĕ пĕтĕмĕшпех юсаса çуракине тухма хатĕрлесе лартнă. Авăн çапас ĕçе татах та тăсса пыни тракторсене юсас ĕçе те чарма пултарать. Çакна шута илсе, МТС коллективĕ колхозсене ĕçлĕ пулăшу пама йышăнчĕ. Авăн çапас ĕçе районри пур колхозсенче те ик-виçĕ кун хушшинче вĕçлес тесе, ремонт ĕçĕнчен пушă трактористсем тата трактористсен курсĕнче вĕренекен 110 çын колхозсене кайрĕç.

«Коминтерн», «Коммунист», Карл Маркс ячĕпе тăракан тата «Сатурн» колхозсем авăн çапас тĕлĕшпе уйрăмах кая юлнă. Трактористсен бригадисем халь çак колхозсенче ĕçлеççĕ те. Ку колхозсенче халь авăн çапас ĕç вăйлăн пулса пырать. Трактористсемпе пĕрле колхозниксем те ырми-канми ĕçлеççĕ. Трактористсем çапнă тырра итем çинчех сортлаççĕ, государствăна тырă çийĕнчех леçес ĕçе те йĕркелерĕç.

Г. Михеев.

Шкул ачисен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕ

СĔНТĔР, февралĕн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Иртнĕ вырсарникун — январĕн 31-мĕшĕнче районри шкул ачисен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕ пулса иртрĕ. Ăмăртăвăн тĕллевĕ—Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа иртекен йĕлтĕрлĕ кроса хатĕрленесси. Ăмăртăва пур шкулсенчи вĕренекенсем те хутшăнчĕç. Малти вырăнсене Мăн Хураçкари, Вăрманкассинчи Туллимар вăтам шкулсем йышăнчĕç.

Анчах хăшпĕр шкулсенче профсоюзсемпе комсомолецсен йĕлтĕрлĕ кросне хатĕрленес ĕç сÿрĕккĕн пулса пырать-ха. Ювановăри вăтам шкулта йĕлтĕрсем çитмеççĕ, унта пуррисемпе те кирлĕ пек усă курмаççĕ. Колхозсенчи çамрăксем йĕлтĕрлĕ тренировкăсем ирттерме пачах тытăнман. Ку тĕлĕшпе уйрăмах «Родник», «Заря» колхозсенче ĕç япăх тăрать.

Комсомолăн пуçламĕш организацийĕсен тата вĕсен секретарĕсен задачи — йĕлтĕрлĕ кросс пуçланиччен юлнă вăхăтпа усă курса, йĕлтĕрлĕ кроса лайăх хатĕрленсе çитесси пулать.

С. Давыдова,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Пирĕн землянсем

СТАЛИНЛА СОКОЛ

Летчик-истребитель Никита Димитриевич Зарубин юлташăн кăкăрне халĕ икĕ орден тата «Отличнику РККА» значок илемлетсе тăраççĕ. Чăнах, ÿкерчĕк çинче икĕ наградаа—«Отличнику РККА» значокпа Хĕрлĕ Ялав орденне çеç курăтпăр. Сталинла сокол Никита Зарубин вĕсене отечественнăй аслă вăрçă пуçланиччен, белофинсене хирĕç пынă хĕрÿ çапăçусем вăхăтĕнче илнĕ. Фотоÿкерчĕкĕ те ку—

вăрçăччен ÿкерттерниех. «Çĕннине вăрçă чарăнсан ÿкерттерĕ-ха, халĕ унпа чăрманма вăхăчĕ те çукрах пулĕ,»—теççĕ летчикăн тăванĕсем.

Н. Д. Зарубин Хĕрлĕ Çарăн Сывлăш-Çар флотĕнче вăрçă пуçланиччене пулнă. Нимĕççен фашистла ирсĕрĕсем Тăван çĕршыв çине вăрăхурахла тапăнни çинчен пĕлсенех, вăл хăйĕн шанчăклă самолечĕ çине ларса, боевой заданисене пурнăçлама вĕçсе кайнă.

Зарубин юлташ службăра тăракан чаçăн командованийĕ унăн тăван килйышне савăнтармалла çыру янă.

«Сывă-и, хисеплĕ Димитрий Максимович тата Васса Никифоровна!

Сирĕн ывăлăр — сталинла сокол Никита Димитриевич Зарубин пирĕн чаçра службăра тăрать. Командовани ячĕпе эпĕ Сире унăн боевой ĕçĕсем çинчен çырса пĕлтеретĕп.

Пирĕн чаçра сирĕн ывăлăра пурте хисеплеççĕ, тăванла юратаççĕ. Вăл хăйĕн пултарулăхĕпе, паттăрлăхĕпе тата хăюлăхĕпе ыттисем хушшинче уйрăмах палăрса тăрать. Пирĕн çĕршыва пĕтерсе хума хапсăнакан нимĕç захватчикĕсем çине вăл вуншар хутчен вилĕм çăмăрĕ çутарнă, хĕрÿллĕ кĕрешÿсенчен яланах çĕнтерÿçĕ пулса тухнă. Темиçе вуншар фриц унăн хăрушă хĕçпăшалĕнчен «леш тĕнчене» ăсаннă.

Никита Димитриевич хăйĕн мĕнпур вăйне, мастерлăхне, хастарлăхне нимĕç фашисчĕсене пĕтерсе тăкас ĕçе хурать. Тăван çĕршывăн, унăн телейлĕхĕпе ирĕклĕхĕшĕн вăл хăйĕн пурнăçне те шеллемест. Партипе правительство унăн паттăрла ĕçĕсене пысăккăн хакларĕç. Ăна Ленин орденĕпе наградăларĕç. Çĕнĕ çул кунĕ — 1943 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче çав наградăна сирĕн ывăлăра панă та ĕнтĕ. Халĕ унăн кăкăрĕ çинче икĕ орден — Ленин орденĕпе Хĕрлĕ Ялав орденĕ тата «Отличник РККА» значок ялтăртатса тăраççĕ.

Çак награда вăл — хаяр та юнлă кĕрешÿре тунă ĕçсемшĕн панă награда. Сире, Никитăн ашшĕ-амăшĕсене, çакнашкал хăюллă ывăл пăхса çитĕнтернĕшĕн пĕтĕм чĕререн тав тăватпăр тата нумай, нумай çулсем хушши пурăнма сывлăх сунатпăр. Çавăн пекех Никитăн йăмăкне — Анна Димитриевнăна тата арăмне — Нина Михайловнăна тав тăватпăр.

Тылра тăрăшса ĕçленипе, эсир фронта ытларах пулăшса тăрăр. Пирĕн урамра пулас праçник çывхарса килет. Сирĕн ывăлăр киле çĕнтерÿпе таврăнĕ.

Саламлă Ф. Гаврилов, Н-ски часть».

Н. Д. Зарубин юлташ — Вăрмар районĕнчи Чубай ялĕнчен. Хăюллă соколăн боевой ĕçĕсемшĕн тата вăл правительствăн пысăк наградисене илме тивĕçлĕ пулнăшăн унăн тăванĕсемпе пĕрле пĕтĕм ял-йыш савăнать.

П. НИКОЛАЕВ.

Производствăллă çĕкленÿ

КАНАШ, февралĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Хулари апат-çимĕç комбиначĕ (управляющийĕ П. Захватова юлташ) 1942-мĕш çула 344.000 тенкĕ тупăш илнипе вĕçлерĕ.

Комбинат коллективĕ кăçал чĕртавар базине хăй патĕнчех тума йышăннă. Çакăн валли сахăр кăшманĕ тата кишĕр акса хăварма ăна 11 гектар çĕр уйăрса панă. Илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçласа пырса, комбинатри пур цехсем те тенĕ пекех январь уйăхĕнчи производство планне ирттерсе тултарчĕç. Премĕк пĕçерекен цех (заведующийĕ Севостьянова юлташ) январьти плана 152 процент, конфетсем тăвакан цех (бригадирĕ Никитина) — 134,6 процент, макарон тăвакан цех (бригадирĕ Васильева юлташ)—223,5 проц. пурнăçларĕç.

Сталин юлташ наступлени тăвакан фронтсенчи войскăсене панă приказа сÿтсе-явнă хыççăн, комбинатри рабочисемпе служащисем Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă уяв тĕлне февральти плана 100 процентчĕпех тултарма, кашни цехра квалификациллĕ икшер рабочи вĕрентсе хатĕрлеме пулчĕç.

Г. Михайлов.

Малгобекра нефть кăларма пуçланă

МАЛГОБЕК, февралĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Нимĕç оккупанчĕсене хăваласа кăларнă хыççăн Малгобекри нефтяниксем промысласене юсаса ĕçе ярас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеме тытăннă. Пĕрремĕш скважинăна ĕçе янă та ĕнтĕ, вăл талăкра 15 тонна паха нефть панă. Халĕ татах тепĕр скважинăна шăтарас ĕç пуçланнă.

Боецсем валли ăшă тумтир пухаççĕ

КУКЕÇ. Наступленилле çапăçусем туса пыракан Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, Платкари «Красное знамя» колхозри комсомолецсем совет воинĕсем валли 15 тир, 4 мăшăр çăм алшиш, госпитальсенчи боецсем валли çытарсем тума 2 килограмм чăх тĕкĕ пухрĕç.

Д. Седов.

Ăнăçман спектакль

Нимĕçсен фашистла пропаганди «Гитлерăн Сталинградри триумфĕ» ятлă капăр постановка хатĕрленĕ. Программăна — фанфарăсемпе литаврăсем, Гитлерăн сăмахĕ, чаплă стратег валли хатĕрленĕ чаплă пуç кăшăлĕ кĕнĕ.

Хĕрлĕ Çар çав постановкăна аркатса ячĕ. Триумф пулмарĕ. Тĕп актерĕ сцена хыçĕнчи кĕтессе хĕсĕнсе ларнă та шарламасăр юлма тăрăшать. Сăмах тухса калассинчен пăрăнса юлма ăс тупрĕ вăл.

Фашистсен лакса ларнă архистратегĕнчен çын кусĕсене пăрса ярас тесе, нимĕçсен фашистла пропаганди васкасах камит тăвать. Спектаклĕн ячĕ — «Нимĕç генералĕсен Сталинградри геройла вилĕмĕ». Программăна — çапăçура пуçĕсене хунă генералсене чаплăн асăнса пытарасси кĕрет. Чаплăн вилнĕ çыннăн тĕп рольне нимĕçсен фашистла войскисен группин командующине Паулюса панă. Берлинра Паулюс валли хăйсĕрех авалхи грек патшин Леонидăн плащне вăсçе хунă. Çав Леонид патша 300 спартанецпа пĕрле Фермопил тăвĕ хушшинче пуçне хунă пулнă.

Нимĕçсен пичечĕ Паулюс çинчен биографиллĕ очерксем пичетлесе кăларать. Çав очерксем куç кĕретĕнех некролог майлă туйăнаççĕ. Гитлер, Паулюс пурнăçĕн юлашки минутисене илемлетес тесе, вилетăпри пулмалли вырăна генерал-фельдмаршалăн званине пырса хунă.

Трансоцеан агентствин çар корреспонденчĕ капитан Серториус Паулюс ÿчĕ умĕнче аванс· шучĕпе пăшăрханулла та витĕмлĕ сăмах калать:

«Генерал-фельдмаршал Паулюсăн тата унăн шанчăклă соратникĕсен геройла çирĕплĕхне Германин нумай ĕмĕрти чаплă çар историйĕнче уйрăмах хисеплĕ вырăн тивĕçет. Германи полководецĕ хăйĕн гренадерĕсемпе юлашки çăкăр татăкне валеçнĕ, хурлăхлă самант килсе çитиччен вĕсемпе алла-аллăн малти линире тăрса çапăçнă».

Германири тăрăхакан сасăсене суя та çуйăхуллă сăмахсемпе хупласа лартас тесе, Германия халичченнихăçан курман намăса тÿснишĕн айăплă пулса тăракан ефрейтортан — Гитлертан çынсен тарăхăвне сирсе ярас тесе, мĕн кирлине пурне те туса хатĕрленĕ.

Анчах çак камит те арканса каять. Тĕп покойник Берлинра çырса хатĕрленĕ роль тăрăх мар вылять. Генерал-фельдмаршал хăйĕн чĕрĕ юлнă гренадерĕсен кун-çулне чăннипех те вĕсемпе пĕрле валеçет. Вĕсем тыткăна парăнаççĕ — вăл та тыткăна парăнать. Генерал-покойниксен, полковник-покойниксен мĕнпур хорĕ те чĕрĕллех парăнать. Спартан патшин Леонидăн плащĕпе 300 герой-спартанец та ытлашши реквизит вырăнче тăрса юлса, сцена çинче йăваланса выртаççĕ. Сталинградра нимĕç геройĕсем тупăнмарĕç.

Берлинра çынсем хăйсен халхисене ĕненмеççĕ. Фашистсен пропаганди хăйсен генералĕсем чĕрĕ юлнипе çырлахма пултараймасть. Трансоцеан агентстви çав намăсла инкекрен çавăрăнса тухас тесе тем те хăтланса пăхать. Вăл çапла пĕлтерет: «Генерал-фельдмаршал Паулюс, Сталинградра пулнă чухне, хăйпе пĕрле яланах икĕ револьвер тата яд илсе çÿренĕ. Советсен аллине вăл мĕнле майпа лекни — тăнран кайнипе-и (вăл темиçе кун каярах кăна йывăррăн аманнă пулнă) е вилсе кайнипе тыткăна лекни — халĕ паллă мар-ха».

Анчах, çук, пурте питех те паллă. Паулюсăн яд ĕçме те, хăйне малтан пĕр револьвĕртан, унтан тепринчен пеме те пур майсем те пулнă, тата унсăр пуçне вара çакăнса вилме те вăхăт çителĕклех юлнă. Гитлер хăйĕн айăпне пула пĕтсе ларнă çара çăлса хăварассишĕн нимĕн те тума пултарайман. Анчах Паулюс хăйне-хăй вĕлертĕр тесе тата хăй хыçĕнчен мĕнпур йĕрсене шăлса хăвартăр тесе, мĕн кирлине пурне те тунă пулнă. Паулюс хăй кăна хатĕрленсе çитеймен.

Нимĕçсен генералĕсем совет тыткăнĕнчи пурнăçа фашистла пичет туса хатĕрленĕ «леш тĕнчери» чапран ытларах хапăлларĕç. Паулюса илсессĕн, вăл советсен аллине сывă пулса тăрсах, чипер ăстăнпах лекнĕ.

Унăн урă ăс-тăнĕ ăна çапла каланă: Гитлерăн преступленине, унăн тăмсайлăхĕпе ухмахлăхне театрти пек вилĕмпе витни айванла ĕç пулнă пулĕччĕ тенĕ. Паулюс тата çакна та асра тытнă: Гитлер ефрейтор кăна пулнă тата вăл ефрейтор кăна пулса юлать те.

Фашистсен спектаклĕ арканса кайрĕ. Кăнттамăн сăрласа хатĕрленĕ Фермопил декорацине Хĕрлĕ Çар пĕтерсе тăкрĕ. Гитлер нимĕнпе те витĕнме пултараймасть. Гитлер çак вăрçăра çавтери пысăк поражени тÿснине халĕ пĕтĕм тĕнче курса тăрать.

Д. ЗАСЛАВСКИЙ.
(«Правда», февралĕн 4-мĕшĕ).

Ют çĕршывсенче

Геббельс Германипе унăн вассалĕсен халăхĕсене вăйлăнрах хĕсме тытăнасси çинчен пĕлтерет

ЖЕНЕВА, февралĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлер «тотальнăй мобилизаци» тума (урăхла каласан, пĕтĕм халăха мобилизацилеме) хушнине хирĕç нимĕçсем кĕрешессине пĕтерес тесе, Германи пропаганди пур майсемпе те хăратма тăрăшать. Геббельс çак ыйтупа каллех статья çырса кăларнă. «Хаяр урок» тесе ят панă çав статьяра Геббельс çапла калать: фронтсенчи лару-тăру çинчен калакан «хурлăхлă чăнлăха» халăхран пытарма кирлĕ мар, тет. Германи, тет вăл, хăйĕн улттăмĕш армийĕпе, Сталинград патĕнче пĕтнĕскерпе, хурлăхлăн сывпуллашрĕ. Германи питех те йывăр кризиса кĕрсе ÿкрĕ, «çав кризиса малалла та йывăрлатса пыни тивĕççĕр пулнă пулĕччĕ».

«Хĕвелтухăçĕнчен хĕссе килнине Германи çарĕ тÿссе тăма пултараймĕ» текен шухăша Геббельс малтанхи хут каласа пачĕ. Çак лару-тăру, тесе çырать Геббельс, нимĕçсене мĕнпур вăя пĕтĕмпех пухма хушать. «Эпир пур çĕрте те çавтери çирĕп требованисем кăларса тăратăпăр, эпир халĕ çавăн пек тапхăра кĕретпĕр», тенĕ статьяра. «Фронт çынсем нумай ыйтать. Çав вăхăтрах Германире лару-тăрăва ăнланман çынсем те нумай-ха, вĕсем сахал ĕçлеççĕ е нимĕн те тумасăр пурăнаççĕ, ĕçсем мĕнле пынине сăнаса тăраççĕ кăна». «Çав вăхăтрах, тесе çырать Геббельс, пулса тăнă лару-тăру халех вассавлă ĕçсем туса ирттерме хушать. Çавăнпа та влаçсем нимĕнле административлă мерăсем умĕнче те чарăнса тăмĕç, «тотальнăй мобилизаци» лартнă задачăсене пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртме тăрăшĕç».

Геббельс каланă тăрăх, Германи «тотальнăй мобилизацие» çавăн пекех тĕнĕл держависенче те туса ирттерет. Вассалсен çĕршывĕсене Германи ним юлмиччченех çаратнине пăхмасăр, Геббельс каланă тăрăх, «Германин вассалĕсен вăйĕпе усă курас тĕлĕшре халиччен мĕн туни питех те пĕчĕк ĕç пулса тăрать». Çапла вара килес вăхăтсенче вассалсен çĕршывĕсем çине, вĕсен материальнăй ресурсĕсене çаратас тесе, çĕнĕрен хĕсме тытăнаççĕ.

«Тотальнăй мобилизаци» мĕн иккенне Германин хĕçпăшалсемпе боеприпассен министрĕ Шпеер Берлинри çар завочĕсенчен пĕринче ухса калани лайăх кăтартса парать. Германин информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, Шпеер вăл выступленире çапла каланă: çав заводри рабочисемпе работницăсене нумай уйăхсем хушши пĕр кун та канмасăр кашни кунах сахалтан та 16 сехет ĕçлеме хушнă. Шпеер çапла каланă: Гитлер Германири предприятисенче ĕçлекен нимĕçсене пурне те çавăн пек ĕçлеме хушĕ, тенĕ.

ХЭЛЛ СОВЕТ ВОЙСКИСЕМ СТАЛИНГРАД ПАТĔНЧЕ ÇĔНТЕРНИ ÇИНЧЕН КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, февралĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен государственнăй секретарĕ Хэлл çапла каланă: Сталинград патĕнче Германи войскисене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкни çинчен пĕлтерни пĕрлешнĕ çĕршывсене пурне те питĕ савăнтарать. Сталинград патĕнче питех те чаплă çĕнтерÿ тунă. Ăна çак вăрçăра ытти çĕршывсен войскисенчен пуринчен те лайăхрах войскăсем тунă. Сталинград патĕнче çĕнтерни вăл вырăссен хĕçпăшаллă вăйĕсен çапăçури питех те пысăк пахалăхĕсене çав тери лайăх кăтартса парать, тенĕ.

Çурçĕр Африкăри лару-тăру

Хэлл заявленийĕ

ВАШИНГТОН, февралĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕрлешÿллĕ Штатсен государственнăй секретарĕ хăйĕн пресс-конференцире каланă сăмахĕнче Иденăн Çурçĕр Африка тĕлĕшпе Англипе США хушшинче хирĕçÿсем çук тесе каланă сăмахне ырланă. Хэлл çапла каланă: Иден тухса калани тĕнĕл держависене хирĕç пыракан кĕрешÿре США пĕрлĕх тума тăрăшнипе килĕшсе тăрать, тенĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ КЕЛЬН ХУЛИНЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 3-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Кельн хулине хаяррăн тапăннă. 20 минута хушшинче ун çине вут тивертекен темиçе пин бомба тата фугаслă бомбăсем нумай пăрахнă, фугаслă бомбăсенчен 100-шĕ 1800-шер килограмм туртаканнисем.

Пĕлтĕр, майăн 31-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле, 1000 самолет вĕççе пырса Кельнри 250 промышленность предприятине сиенленĕ пулнă. Çавăн хыççăн нимĕçсем унта çĕмĕрĕлнĕ предприятисене юсас тесе питĕ нумай ĕçленĕ. Октябрĕн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тепĕр хут вăйлăн тапăнса, çав ĕçсене чарса лартнăччĕ. Çак юлашки хут тапăнни вăл тĕлĕшпе тата пысăкрах сиен тунă.

Юлашки хут тапăннă чухне пуринчен ытла подводнăй лодкăсем валли дизельмоторсемпе аккумуляторсем тăвакан пысăк заводсене тата Маузерăн пăшал заводне атакăланă.

Районри хаçатсенчен

„Лесоруб Чувашии" ятлă танксем тума 38.700 тенкĕ

Сталин юлташ пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсене тата комсомолецсемпе çамрăксене танксемпе самолетсем тума укçа пухнăшăн саламланине, Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тунине ответлесе, Буинск леспромхозĕнчи (директорĕ Васильев юлташ) рабочисемпе служащисем тата инженерно-технически работниксем «Лесоруб Чувашии» ятлă танксем тума кĕске вăхăт хушшинчех 38.700 тенкĕ укçа пухнă. Ку ĕç малалла та пулса пырать.

(«Колхоз пурнăçĕ»).

Пионерсемпе шкул ачисем вăйлă тырпулшăн кĕрешеççĕ

Мамăшри (Ишлей районĕ) пионерсемпе шкул ачисем колхоза çуракине хатĕрленнĕ çĕрте активлăн пулăшаççĕ. Ку ĕç уйрăмах иккĕмĕш бригадăра (бригадирĕ Н. Иванова) аван пулса пырать. Унта пионерсемпе шкул ачисен вăйĕпе 42 гектар çинче юр тытнă. Яков Михайлов тата Леня Михайлов пионерсем тăрăшнипе 40 центнер кĕл, 8 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă.

Вырăнти удобренисем пухса хатĕрлесси малалла пулса пырать.

(«Колхозник хаçачĕ»)

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Тури Атăл пароходствин Шупашкар пристанĕ государство тата коопераци организацийĕсен, 1943 çулхи навигацире грузсем яма шутлаканскерсен, руководителĕсене çакăн çинчен пĕлтерет: пароходсем çÿреме пуçласан пристань грузсем илсе ăсатас ĕçе грузсем яма тата илме хăйсен организацийĕсенчен доверенность илнĕ çынсемпе çеç тăвать: кашни организацин пароходсем çÿреме тытăннă вăхăта лимитированнăй кĕнекесем е грузсем янăшăн тÿлеме укçа пулмалла.

Доверенноçсăр тата лимитированнăй кĕнекесемсĕр грузсене илсе ăсатас ĕçе тумаççĕ.

Пристань.

Чебторгăн подсобнăй хуçалăхне ялхуçалăх ĕçĕсенче ĕçлеме чернорабочисем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Ленин урамĕ, 11, Чебторгăн кадрсен отделĕ.

Дирекци.

Шупашкарти арман комбинатне ялан ĕçлеме бухгалтерсем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Урицкий урамĕ, 15. Телефон 2—16 икĕ звонок.

СССР Совнаркомĕн 1943 çулхи январĕн 15-мĕшĕнчи 857-р номерлĕ распоряженийĕ тăрăх тата ССР Союзĕн Совнаркомĕ çумĕнчи Халăх хуçалăхне вăрман материалĕсемпе вутă парса тăракан Главнăй Управленин («Главснаблесăн») начальникĕ 1943 çулхи январĕн 18-мĕшĕнче панă 18-мĕш номерлĕ приказ тăрăх, ССР Союзĕн Совнаркомĕ çумĕнчи Главлесосбытăн Чăваш конторине «ССР Союзĕн Совнаркомĕ çумĕнчи Главснаблесăн Чăваш республикинчи Управленийĕ» тесе ят панă.

Управлени адресĕ: Шупашкар хули, Урицкий ур., 36.

Телеграф ямалли адрес: Шупашкар, Чувашглавснаблес.

«Красный Яуш» колхоза опытлă тимĕрçĕ кирлĕ. Ĕçукçи калаçса татăлнă тăрăх тÿлеççĕ.

Çак адреспа ыйтмалла: Ишлей районĕ, колхоз «Красный Яуш».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн —3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 628 Типография №, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 53. 84 п.